Материал представлен из коллекции электронной библиотеки «Писатели Чувашии – детям» – **pchd21.ru**
Электронная библиотека создана Чувашской республиканской детско-юношеской библиотекой **– www.rdub21.ru** – на средства гранта Президента Российской Федерации для поддержки творческих проектов общенационального значения в области культуры и искусства

**Автор: Светлая (Петрова) Елена Владимировна**

**Книга: Яшлăхпа ватлăх**

**Басня: Лĕпĕш**

Хĕвел савса пăхать пур таврана,
Хĕл ыйхинчен тĕнчемĕр вăранать…
Мĕнле илем халь пахчара, уйра,
Мĕнле хаваслăх варкāшать чунра!

Çак ырă та илемлĕ çуркунне
Сап-сарă Лĕпĕш килчĕ тĕнчене,
Вăл вĕçрĕ чечекрен чечек çине,
Тутанчĕ пĕтĕм курăк çеçкине,
Çӳрерĕ пахчана илем кӳрсе,
Эй, Турăçăм, тавах сана тесе…

Çак ырлăхра кун хыççăн кун иртет…
Хĕвеллĕ Лĕпĕш вĕлкĕшсе çӳрет.
Сасартăк вăл сисет темскер çитменнине,
Хăйне ку пурнăç йăлăтарнине.
Пĕр каçхине çак Лĕпĕш асăрхать:
Таçта, лере, çурта, йăлтăтатса çунать.
Калать вāл хăйĕн тантăшĕсене:
− Мĕнле асамлăх! Мĕн тери кĕтрет!
Мана, туссемĕр, çĕн тĕнче кĕтет!

Тантăшĕсем ăа ятлаççĕ,
Чунтан ӳкĕтлесе калаççĕ:
− Вăл çуртапа, тархасшăн, ан çыхлан,
Вут-хĕмпеле яланлăх шар куран… −
Анчах та Лĕпĕш итлемест, вĕçет,
Мана чĕнет тет йăтăрккa инçет.
Çурта патне çитет вăл çывхарса,
Вĕри хĕлхем илет те çавăрса −
Ярать ик çунатне те çунтарса…
Ак ĕнтĕ Лĕпĕш çĕр çине персе анать,
Çапла хаваслă пурнă татăлать.

Кунта, туссем, çакна каламалла:
Сан пурнăçу чип-чиперех пулсан
Ан вĕç эс каялла та малалла,
Пĕрре хă сукмаку çине тухсан
Мĕн-ма сан урăх çул шырамалла?

Все тексты взяты из открытых источников и выложены на сайте для не коммерческого использования.
Все права на тексты принадлежат только их правообладателям.